Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!

# ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă.* N 137 (4706) *1998 çулхи декабрь (раштав) уйăхĕн 2-мĕшĕ, юнкун* *Палăртнă хакпа.*

## Гайтан ялĕн савăнăçпа шанăç çутисем

Иртнĕ эрнекун Гайтан ялĕнче пурăнакансемшĕн питĕ те паллă кун пулчĕ: кунта ялти пĕрремĕш çуртсенче çутçанталăк газĕн сенкер çути çуталса кайрĕ.

Ку событи чăн-чăн уяв пулса тăчĕ. Кунтан тĕлĕнмелли çук: ялта пурăнакансемшĕн лайăх пурнăç шанăçĕ шăпах газификацирен пуçланать вĕт.

Уявра çак ыйтăва татса панин лайăх енне палăртса хулапа район администрацийĕн пуçлăхĕ Ф.С.Сибагатуллин çапла каларĕ: “Гайтан ялĕ паян çĕнĕ тапхăра кĕчĕ. Газ сире вутă, кăмрăк хатĕрлессинчен хăтарчĕ. Апла пулсан хальхи вăхăтра пурнăç мĕнле йывăр пулсан та газпа лайăхрах пулĕ”.

Чăнах та ĕнтĕ Гайтан çыннисем ку куна чылай кĕтрĕç: яла газификацилес ĕçе 5 çул каярах пуçланă, анчах та çак тапхăр инфляци вăхăчĕпе тĕл килнĕ, газ оборудованийĕн, материалсен хакĕ кунсерен ӳснĕ. Анчах та çак йывăрлăхсене пăхмасăр çынсем çутçанталăк газне кĕртме питĕ тĕплĕн хатĕрленнĕ, район ертӳçисем вара Димитровград хулинчи 14-мĕш МСУ газовикĕсемпе Гайтан ялне газомагистраль хывма договор тунă. Участок коллективĕ, В.С.Кузнецов ертсе пыраканскер, планпа палăртнă ĕçе пĕтĕмпех пурнăçланă.





Сетьри газпа чи малтан Алексейпа Елена Пайгирчевсен çуртне çыхăнтарчĕç. Хуçалăхра вĕсем питĕ тăрăшуллă, малта пыракан ĕçченсем шутланаççĕ, виçĕ ача ӳстереççĕ.

- Ан тив вăл сирĕн телей, тăнăçлăх, сывлăх çути пултăр çемйĕрте, - терĕ Ф.С.Сибагатуллин, газ плитин конфоркине чĕртсе.

Çак çурта пуçтарăннă хăнасем, ял çыннисем пурте алă çупрĕç.

- Газ хакне ăнланса, пĕлсе унпа тирпейлĕ, асăрхануллă кăна усă курмалли юлать, - терĕ хушса пуçлăх.

- Ку пирĕншĕн чи савăнăçлă та телейлĕ кун, - терĕç хуçасем, хăнасене газпа пĕçернĕ икерчĕпе хăналаса. - Шанас та килмест.

Çамрăк мăшăрсемпе пĕрле кунта Алексейăн амăшĕ - 78 çула çитнĕ Анна Яхвоновна пурăнать. Вăл та çемьене вутă хатĕрлессинчен хăтарнисене пурне те тав туса пĕтерейместь.

Çав кун çаплах газ кӳршĕри Волковсен çуртĕнче те çунма тытăнчĕ. Кунта Клементьеван хĕрĕпе кĕрӳшĕ пурăнаççĕ, кинемей 91 çула çитсе çакăн пек событие кĕтсе илнĕ.

- Эпĕ хамăнне пурăнса иртернĕ ĕнтĕ, çамрăксемшĕн савăнатăп, - терĕ вăл.

Гайтан - пысăк ял мар: 200 çуртра 500 çын пурăнать. Малашне кунта пурăнакансен хисепĕ ӳсессе шанас килет, мĕншĕн тесен, çамрăксенчен ытларахăшĕ халь ялта юлаççĕ вĕт, ялти пысăк та ирĕк шкулта пурнăç лайăх пырать.

- Пĕрремĕш çуртсенче тахçантанпах кĕтнĕ газ çунма тытăнсан ялта пурăнакансем пурте вырăнтан хускалчĕç, вĕсем те хăйсен çурчĕсенче газ çунма тытăнасса чăтăмсăррăн кĕтеççĕ, - тет ОКС начальникĕ М.Х.Миннебаев. - Документацисем хатĕр. Халь вара пурте хуçалăх ертӳçисенчен тата Гайтан ялĕнче пурăнакансенчен хăйсенчен килет.

**Ф.ЗИЯТДИНОВА.**
**Н.АЗИЗОВ ӳкерчĕкĕсем.**

## Хаçат çырăнакансене пĕлсе тăма

1999 çулхи пĕрремĕш çур çула районта тухса тăракан “Дуслык” (“Дружба”, “Туслăх”) хаçата çырăнтарасси октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçланнă. Хаçат хакĕ - 25 **тенкĕ те 20 пус**; Аслă Отечественнăй вăрçа хутшăннисен тата инвалидсен, Афганистанра пулнă воин-интернационалистсен, ЧАЭС аварие пĕтернĕ çĕре хутшăннисен 50 процент кăна тӳлемелле (çирĕплетекен документсем пулсан). **Çапла, хаçат çырăнтарасси малалла пырать, çырăнтаракан пунктсене васкăр.**

## Тĕслĕх илмелли пур

Тунтикун хуçалăхсен, районти агропромышленность комплексĕн ĕçлесе хатĕрлекен тата тивĕçтерекен предприятисемпе организацисен ертӳçисем, администраци пайĕн заведующийĕсем, ял хуçалăхĕпе апат-çимĕç управленийĕн тĕп специалисчĕсем хутшăннипе иртнĕ семинар-канашлăва вырăнти вольăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçĕн 11 уйăхри итогĕсене тата хальхи йывăр вăхăтра çак отраслĕн тĕреклĕхне сыхласа хăварассине халалланăччĕ. Семинара хутшăннисем “Надежда” агрофирмăн мĕнпур кооперативĕсенчи выльăх-чĕрлĕх объекчĕсенче пулса курса ĕçе мĕнле йĕркеленипе, выльăхсене пăхмалли тата апатлантармалли технологипе паллашрĕç. Семинар-канашлăвăн ĕçне администраци пуçлăхĕ Ф.С.Сибагатуллин ертсе пычĕ. Çакăн çинчен тĕплĕнрех хаçатăн çитес номерĕсенчен пĕринче вуласа пĕлме пултаратăр.

## Вагон-прицеппа çӳреме пулать

Нурлатпа Хусан хушшине пассажирсем турттаракан вагон-прицеп çӳреме тытăннă. 54 вырăнлă плацкартлă вагон Нурлатран 909 номерлĕ Челябинск- Мускав поездпа мăшăрсăр числосенче 14 сехет те 40 минутра каять. Хусана вăл тепĕр кун ирхине 4 сехет те 15 минутра çитет.

Хусантан вара вагон-прицеп 919 номерлĕ Хусан-Волгоград поездпа мăшăрсăр числосенче каçхине 22 сехетре тухать. Юлашки пункта кăнтăрла 12 сехетре çитет. Билет хакĕ 67 тенкĕ.

## Ăçта-ши ку урам, ăçта-ши ку çурт?

Декабрĕн 11-12-мĕшĕсенче Хула кунĕ тата автомашинăсен хĕллехи ăмăртăвне ирттернипе Нурлатра Çĕнĕ çул уявĕ тĕлне администраци çурчĕсене, производство участокĕсене, урамсене, площадьсене, çуртсене капăрлатас тĕлĕшпе конкурс ирттересси çинчен пĕлтернĕ. Çуртсене, территорисене илемлĕ чăрăшсемпе, тĕрлĕ тĕслĕ çунакан гирляндăсемпе, юр кĕлеткисемпе илемлетме пулать.

Конкурс итогĕсене йĕркелӳ комитечĕ пĕтĕмлетĕ.

## Сцена çинче - пирĕн ентеш



*Декабрĕн 10-мĕшĕнче районти культура çуртĕнче пирĕн ентеш, композитор тата юрăçă Рамиль Мифтахов хăйĕн концерт бригадипе нурлатсене савăнтарĕ. Концерт 19 сехетре пуçланать. Билет хакĕ 10 тенкĕ. Инвалидсен вунăкунлăхне шута илсе Рамиль концертра пуçтарăннă укçан пĕр пайне районти инвалидсене пулăшу паракан фонда куçарма шутланă .*

## Чĕмпĕрти чăваш хаçачĕ 80 çулта

Чĕмпĕрте пĕрремĕш хут чăваш чĕлхипе хаçат тухса тăма тытăннăранпа 80 çул иртнĕ.

Сакăр теçетке каялла, 1918 çулта, Чĕмпĕрте Октябрьти Социализмла Аслă революци тивлечĕпе “Çĕнĕ пурнăç” хаçат тухма пуçланă. Ăна йĕркеленĕ чухне активлă хутшăннă чăваш журналисчĕсенчен С.М.Авксентьевпа И.Н.Юркин, Степан Лашман писательсен ячĕсене асăнмалла. Унăн пĕрремĕш редакторĕ Г.Савандеев 137 номер кăларма ĕлкĕрнĕ. Граждан вăрçи пуçлансан вăл тухма пăрахнă. Унăн кун-çулне паян “Канаш” хаçат малалла тăсать.

### Декабрь уйăхĕнчи “йывăр” кунсем

2-мĕшĕ, юнкун (14 сехетрен пуçласа 16 сехетчен), 4-мĕшĕ, эрнекун (15-17), 9-мĕшĕ, юнкун (11-13), 11-мĕшĕ, эрнекун (11-13), 19-мĕшĕ, шăматкун (7-9), 24-мĕшĕ, кĕçнерникун (10-12), 26-мĕшĕ шăматкун (11-13), 29-мĕшĕ, ытларикун (12-14).



**Паллашăр, сирĕн умăрта “Нурлаттаз” ЭПУ ĕçченĕсем Ирек Галеевич Галиевпа Владимир Григорьевич Мандрейкин. Вĕсем иккĕшĕ те газ оборудованине юсакан комплекслă служба слесарĕсем. Вĕсем тăрăшнипе районта чылай çурта çутçанталăк газĕпе çыхăнтарнă, çав шутра район центрĕнчен инçе вырнаçнă ялсенче те: Кăчăканлă, Селенкĕш. Çынсен савăнăçне курса, вĕсен тав сăмахĕсене илтсе вĕсем хăйсем пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç пурнăçланине туяççĕ, çавăнпа тата та ăнăçлăрах вăй хума тăрăшаççĕ.**

**Пирĕн фотокорреспондент Н.Азизов вĕсене Кăчăканлă ялĕнче çуртсене газ кўртнĕ вăхăтра ўкерсе илнĕ.**

## Пĕтĕм тĕнчери курав

Мускавра Пĕтĕм тĕнчери “Курттăм сутакан рыноксем” ятарлă курав уçăлнă. Ун ĕçне 12 çĕршыври çĕр предприятипе фирма хутшăнать.

Çитес çулсенче Раççейре те тĕнче шайĕнчи рыноксем ĕçлеме пуçлĕç. Сĕмахран, 2000 çул тĕлне Раççейре çакнашкал рыноксем тăххăр пулаççĕ. Каярахпа вĕсен шучĕ 25-е çитĕ.

## Пĕлтĕрхинчен нумайрах сутнă

Раççей Федерацийĕ кăçалхи тăххăр уйăхра пĕлтĕрхипе танлаштарсан ют çĕршывсене нефть чылай ытларах сутнă. Раççей Федерацийĕн Патшалăх таможня комитечĕ тата Патшалăх статистика комитечĕ пĕрле çирĕплетнĕ тăрăх, кăçал Раççей тĕнче рынокне 101 миллион тонна нефть сутма пултарнă, ку пĕлтĕрхинчен 7,5 процент ытларах пулать. ПРАЙМ-ТАСС корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Раççей кăçал чĕрĕ нефть сутса 8,1 миллиард доллар чухлĕ тупăш илнĕ.

**(ИТАР-ТАСС).**

## Опытпа улшăнни

**Патшалăх Думи, РФ Вĕрентў министерстви тата “Педагогический вестник” хаçат шкул çулне çитмен ачасен тата шкул учрежденийĕсем хушшинче пĕтĕм Раççейри конкурс ирттерессине пĕлтернĕччĕ. Унта шкул çулне çитмен ачасен хăш-пĕр учрежденийĕсем тата шкулсем хутшăнчĕç, “Светлячок”, “Солнышко”, “Родничок”, Кивĕ Чаллăри ача сачĕсем, çаплах Пĕчĕк Хăмăшлăри, Лачакари, Селенкĕшри шкулсем вара конкурс итогĕсем тăрăх лауреат ятне илнĕ, çак учрежденисен заведующийĕсене семинар-канашлăва чĕннĕ. Лауреатсенчен пĕри - “Солнышко” ача сачĕн заведующийĕ Суфия Шафиковна Сулейманова Мускава кайма май шыраса тупнă. Халь вăл асра юлнисем çинчен каласа парать.**

# “Конкурссене хутшăнма ан хăрăр”

- Мускава Раççейри мĕнпур регионсенчен 300 ытла лауреат пуçтараннă, вăл пире питĕ ăшшăн кĕтсе илчĕ. Семинара йĕркелў комитечĕн председателĕ, “Педагогический вестник” хаçат учредителĕ Л.И.Рубинский илсе пычĕ. Семинара хутшăннисен умĕнче академиксемпе профессорсем тухса калаçрĕç. Н.Н.Подьяков академик тухса калаçни уйрăмах ăнăçлă пулчĕ тесе шутлатăп.

Питĕ нумай ыйтусем **çĕклерĕç. Хальхи йывăр вăхăтра ĕçе мĕнле илсе** пымалла? Ачасемпе шкул çулне çитмен ачасен учрежденийĕсене мĕнле сыхласа хăвармалла? Мĕнле программăна тĕпе хурса ĕçлемелле тата вĕсене мĕнле пурнăçа кĕртмелле? Ку тĕлĕшпе “Çăлкуçсем”, “Ачалăх”, “Асамат кĕперĕ” евĕрлĕ программăсене чи лайăххисем тесе палăртрĕç. Анчах та ĕçе вĕсенчен хăшĕнпе йĕркелесен те, ачасен сывлăхĕшĕн тăрăшасси, ачана тимлĕх уйăрасси тĕп вырăн йышăнмалла.

Ача сачĕсем савăнăç, телей вырăнĕсем пулмалла - халь шăп кăна çавăн пек задача тăрать. Ача ытларах кулмалла, савăнмалла, кĕскен каласан, лайăх туйăмпа кăна пурăнмалла. Кунта вара воспитатель хăйĕн ĕçĕнче тĕрлĕ кулăшсемпе усă курни питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Семинарта шкул çулне çитмен ачасене вулама, çырма ирĕксĕр вĕрентнине критиклерĕç. Пирĕн нуша акă мĕнре: ачасем ăстăн тата ўт-пў енчен хуллен аталанни çинчен манса, эпир вĕсенчен вундеркиндсем тума тăрăшатпăр. Ача сачĕсене шкула çавăрмалла мар тесе çирĕплетрĕç делегатсем. Ачасен вĕренес туйăмне йĕркелесси, нравственноçпа этика енчен воспитани парасси вара шкул çулне çитмен ачасен учрежденийĕн тĕп задача пулмалла. Хăш-пĕр ачасем вулама, çырма вĕреннĕ пулин те, аван-и, таврапуç теме пĕлменни никамшăн та вăрттăнлăх мар ĕнтĕ.

Юлашкинчен “Педагогический вестник” хаçатпа çыхăну тытмалли çинчен каларĕç. Ку вăл ачасен учрежденийĕсен тата шкулсен пурнăçĕпе, вĕрентўри çĕнĕлĕхсемпе анлă паллаштаракан пĕртен-пĕр хаçат вĕт. Ку вăл педагогсем валли трибуна пулса тăрать.

Семинар пынă вăхăтра виçĕ кун хушши методика пособийĕсен выставки ĕçлерĕ. Унсăр пуçне, конкурс çĕнтерўçисене парне - илемлĕ литература чылай пачĕç.

Семинар ĕçне хутшăнса эпĕ хама мăнкăмăллă туйрăм, хамăрăн республикăшăн, районшăн чĕререн савăнтăм - мĕншĕн тесен форумра Тутарстантан чи нумай делегат хутшăнчĕ вĕт. Эпĕ районти çутĕç пайне тав тăвас тетĕп, вĕсем тăрăшнипе эпир, пысăках мар Нурлат хулинче пурăнакансем, Пĕтĕм Раççей масштабĕнче иртекен мероприятие хутшăнма пултартăмăр.

Çаплах хамăн ĕçтешсене çапла калас килет: конкурссенчен ан хăрăр, творчествăлла ĕçлеме тата яланах шыравра пулма тăрăшăр. Конкурссемпе семинарсем - вĕсем чун-чĕрене канăç параççĕ, ку тавракурăма анлăлатма, пĕлĕве ўстерме май парать. Кунта эпир çаплах çĕнĕ туссем тупатпăр, ку та питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ.

### “Нурлатнефть” НГДУра

# Инçетри промыслари тĕл пулу

Нефтьпе газ кăларакан “Нурлатнефть” управленире 74 çын мастер пулса ĕçлет. Вăтам звено командирĕсене управлени ертўçисем шанаççĕ. Вĕсемшĕн ĕç пĕрремĕш планра. Опыт пур тата сахал та мар. Бригадăсем хушшинче професси ăсталăхне тĕрĕслес тĕлĕшпе конкурссем ирттересси те иалана кене, кунти ăнăçлăх вара çак бригадăсене ертсе пыракан мастерсенчен нумай килет. “Çулталăкри чи лайăх мастер” конкурс та йĕркелеççĕ. Кăçал çак ята илме виçĕ çын тивĕç пулчĕç. Çаплах пилĕк çын “Татнефть” АО Хисеп грамотине илчĕ.

Бригада членĕсем пĕр-пĕрин патне çўрени те ăнăçлăхсем тума пулăшать, вĕсем ĕçе мĕнле меслетпе йĕркеленипе, вырăнсенче ĕçсене мĕнле илсе пынипе паллашаççĕ.

... Ноябрь уйăхĕнчи пĕр кун управленири нефтьпе газ кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен мастерсем семинар-канашлăва нефтьпе газ кăларакан 2-мĕш номерлĕ цех базине пуçтарăнчĕç. Ăна хамăр патри промыслан начальникĕсем ертсе пычĕç. Кунта çаплах НГДУри ытти ертўçĕсем те хутшăнчĕç - начальникăн çумĕсем, тĕп специалистсем, хăшпĕр уйрăмсемпе службăсен начальникĕсем, ĕç сыхлавĕпе хăрушсăрлăх техники тĕлĕшпе ĕçлекен комисси членĕсем те вĕсемех.

Ку промысла, ертсе пыракан центртан чи инçетри, анчах ăна та ыттисем пекех тимлĕх уйăраççĕ. Кунта, çитмĕл километрта вырнаçнă промыслана кашни кун тĕрлĕ специальность çыннисем ĕçлеме пуçтарăнаççĕ - объектсем тăваççĕ, вĕсене оборудованилеççĕ, скважинăсене тĕпчеççĕ тата юсаççĕ.

2-мĕш ЦДНГ территорийĕнче урăх цехăн тĕп объектсем те вырнаçнă - комплекслă хатĕрлекен тата нефть уçлакан, хĕсекен насус станцийĕ - ДНС-4 тата пысăк кўкĕртлĕ нефть хатĕрлекен установка, хăйĕн сосучĕсем витĕр çулталăкра икĕ миллион тонна ытла нефть кăларакансker.

Промыслари тĕлпулу уяври пек мар, питĕ ĕçлĕ лару-тăрура иртрĕ. Тĕп тĕллев - промысла объекчĕсен мастерĕсемпе пĕрле ĕçе мĕнле йĕркеленине, ĕç условийĕсем мĕнле пулнине, производство культурине мĕнле тытса пынине палăртасси. Кунта вара мĕне тимлĕх уйăрмалли пурччĕ. Сăмахран, газ виçекен 312-мĕш номерлĕ насус установки, нефть пухмалли тата уçламалли комплекс пек курăнакансker, чи кивĕ объектсенчен пĕри. Кăçал ăна пĕтĕмпех реконструкциленĕ, кивĕ оборудование улăштарнă, кунти ĕç условийĕсем те лайăхланнă. Йăла енчен те - кăçал оператор çуртне хута янă, унта канмалли тата ĕçлемелли ирĕк те çутă пўлĕмсене илемлĕ капăрлатнă. Çак çуртра вырнаçнă, уйрăм алăкран кĕмелли столовăйра та хальхи вăхăтри оборудовани вырнаçтарнă, апатланмалли пўлĕм те питĕ лайăх.

Çав кун вырăнсенче пулса вун-вун скважина тата газ виçекен темиçе установкăсен шайне тĕрĕслерĕç.

Делегаци çаплах цехсен ытти - нефть хатĕрлекен тата уçлакан, тăпра сийĕн пусăмне тытакан объектсенче пулчĕ.

Курни-илтни çинчен калаçу 2-мĕш ЦДНГ администраци çурчĕн хĕрлĕ кĕтесĕнче пычĕ.

ЦИТС начальникĕ Валерий Воронцов ĕçлесе хатĕрлекен пай начальнике ильшат Маннапов, тĕп энергетик Рафик Махмутов, тĕп инженерăн хăрушсăрлăх техники енĕпе ĕçлекен çумĕ Фарит Альков тухса калаçса, пухăннисене “Татнефть” АО, НГДУ ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарчĕç, унтан кутемасен ĕçне тишкерсе тухрĕç.

Кунти нефтьпе пуян вырăнсем хăйсен запасĕсене çăмăллăн памаççĕ. Нефть ытлашши çăра, сухăр, асфальтен тата кўкĕрт нумай. Çитменнине нумай çул хушшинче - 1974 çултан тытăнса уçласа илекен пуçламăш запассенчен 44-48 процентне суйласа илнĕ тата кăларакан продукцие шывлăлантарни 45 процента çитет.

Цех хăйĕн тĕп задачине пурнăçлассипе - нефть кăларассипе пысăк ĕç ирттерет. Пĕрлехи вăйпа скважинăсен продукци паракан мĕнпур фондне хута янă. Геологипе техника мероприятийĕсене ăнăçлă пурнăçлаççĕ. Ивашкел - Пĕчĕк Сĕнчери нефтьпе пуян вырăнсенче полимер системисене тултармалли малта пыракан технологие, çĕр сийĕне циклпа шыв тултарассине ĕçе кĕртнĕ. Çав вăхăтрах цехăн юсанă скважинисене ĕç режимне хăвăртрах кĕртессинче ытларах оперативлăх кăтартмалла.

Хăйне евĕрлĕ семинар-канашлу, комисси тĕрĕслевĕ вăхăтĕнче промысла ертўçисене, специалистсене, мастерсене ĕç сыхлавĕ тата хăрушсăрлăх техники тĕлĕшпе нормăсен Правилисене пăхăнас ыйтусем тĕлĕшпе хытă асăрхаттарчĕç.

Цехсен начальникĕсем- скважинăсене юсассипе Назым Шафиков, нефтьпе газ кăларассипе Анатолий Саватников тата Флорит Сатретдинов хăйсен сĕнĕвĕсемпе асăрхаттарăвĕсене каларĕç .

2-мĕш ЦДНГ начальникне Жалиль Мухаметшина тата ăна пăхăнса тăракан специалистсемпе мастерсене çав кун çăмăл пулмарĕ. Йышăнма, сарма хистекен лайăх опытпа пĕрлех япăх енлĕ фактсене те палăртрĕç.

Семинар итогĕсене НГДУ начальникĕн кадр тата юридически ыйтусем тĕлĕшпе ĕçлекен çумĕ Дамир Валеев пĕтĕмлетрĕ.

“Çакăн пек тĕлпулусем пысăк пĕлтерĕшлĕ тата усăллă. Уççăн калаçни, шухăшсемпе улшăнни - лайăх вĕренў. Пиртен, вăтам звено ертўçисенчен нумай килнине эпир тепĕр хут ĕнентĕмĕр. Эпир çакна хамăр та яланах ăнланса çитейместпĕр. Анчах та ăнланмалла”, - çакăн пек пĕтĕмлетў турĕ инçетри нефть промыслинчи тĕлпулăва хутшăннисенчен пĕри, нефть кăларакан тепĕр цехри мастер Евгений Сидоров.

**В.БУРАЙКИН.**



# “Юрă-кĕвĕсĕр пурнăç - пурнăç мар”

Сăнар



**Пирĕн героя (паттăра) баянсăр курма хăнăхман. Унăн мĕнпур пурнăçĕ музыкăпа, баянпа çыхăннă.**

Талгат Сафаргалеевич хăйĕн пурнăçне 4 тапхăра пайлама хăтланать. Пĕрремĕшĕ - Кислеври вăтам шкултан вĕренсе тухнă хыççăнхи, вăл Вăтам Чаллăра клуб заведующийĕ пулса ĕçленĕ çулсем. Ятарлă пĕлÿ пулман. Анчах та аллинче купăс (ялти каччăшăн ку та ĕç), чĕринче - пысăк туртăм, тăрăшулăх пулни питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çав вăхăтра кунта çĕнĕ клуба туса пĕтернĕ, унта каççерен халăх чылай пуçтараннă. Шăп кăна çав çулсенче вăл республикăри Халăх творчествин çурчĕ çумĕнчи баянистсен курсĕсенчен вĕренсе тухнă, çынсемпе калаçма, вĕсене ăнланма вĕрехнă. Апла пулин те, теори пĕлĕвĕ, професси ăсталăхĕ çитменни палăрмасăр пултарайман, çавăнпа вăл 1970 çулта Хусанти культура институтĕнчи халăх инструменчĕсен оркестр уйрăмĕнче вĕренме тытăнать. Тин кăна ĕçлеме тытăннă уйрăмра пуçламăш музыка пĕлĕвĕсĕр пурĕ те икĕ студент кăна пулнă, вĕсенчен пĕри - Талгат Бадыгин. Çавăнпа та музыковедени специалисчĕн теори никĕсĕсене алла илес тесен пысăк вăй хума, тăрăшма тÿр килнĕ, çавăнпа результатсем те хăйсене кĕттермен. 1974 çултан пуçласа Т.С.Бадыгиншăн виççĕмĕш тапхăр пуçланать - професси пĕлĕвне тĕрлĕ енчен, кашни жанра тĕрĕслемелли тапхăр. Çакăн никĕсĕ те пур: çынсемпе ĕçлес опыт, пĕлÿ те çителĕклĕ, чи кирли вăл - ĕçлес туйăм пысăк пулни. Çаксемпе пуринпе те вăл хăйĕн ĕçĕнче усă курма тытăннă, районти культура çуртĕнче пилĕк çул хушши методист пулса вăй хунă. Ку вăл районти культура çуртне К.В.Изотова ертсе пынă çулсем пулнă. Вăл вăхăтра организацисемпе предприятисенче, клубсенче хорсем, юрă ансамблĕсем йĕркеленĕ, творчество отчечĕсем ирттересси те йăлана кĕнĕ пулнă. Кашни коллективăн концерт программи хортан тытăннă та кайран 250-300 çынран тăракан пĕрлештернĕ хорпа вĕçленнĕ. Вĕсене, тĕпрен илсен, Т.С.Бадыгин ертсе пынă, ăна культурăпа çутĕç училищинчи хор класĕнчен вĕренсе тухнă специалистсем пулăшнă. Талгат Сафаргалеевича каççерен баянĕпе НГДУ, НУРБ коллективĕсенче, сахăр заводĕнче, инçетри ялсенчи клубсенче курма пулнă. Вăл халь те НГДУ хорне тунсăхласа аса илет. Кивĕ Чаллăри Т.Ш.Нургалеев парторг ыйтнипе тăвата уйăх хушши хор коллективĕпе ĕçленĕ, Кульбаево-Марасара юрă ансамблĕ хатĕрленĕ. Тăрăшни сая кайман. 1977 çулта районти хор коллективĕ Октябрь уявĕ 60 çул тултарнине халаллана Пĕтĕм Раççейри смотрта лауреат ята тивĕç пулнă. Талгат Сафаргалеевича каярах та тĕрлĕ çĕрте хор коллективĕсем йĕркелеме тÿр килнĕ, авторитетлă титулсене чылай тивĕç пулнă, анчах та вăл пĕрремĕш çĕнтерĕве нихăçан та манаймĕ, вăл яланах унăн чĕринче пулĕ.

Çак çулсем хушшинче вăл пултаруллă çынсемпе тĕл пулнă, анчах та вĕсенчен хăшĕ-пĕри Нурлатра никĕсленсе юлайманнине питĕ пăшăрханса аса илет.

Вĕсен шутĕнче А.М.Изотов ташă ăстин çемйи те, ун пирки вăл уйрăмах кулянать.

1972 çулта ăна музыка шкулне ертсе пыма шанаççĕ. Ку Т.С.Бадыгин биографийĕнче тăваттăмĕш тапхăр, нумай-и, сахал-и-20 çул! Çак çулсене Т.С.Бадыгинăн пурнăçĕн мĕнпур тапхăрĕ кĕрет, çав вăхăтрах - ку çулсенче ачасен музыка шкулĕн коллективĕ çитĕнÿсем туса, улшăнса ура çине тăни те. Ачасен музыка шкулĕ 15 çул хушши малтанхи НУРБ УККăн тара илнĕ çуртĕнче ĕçленĕ. Çĕнĕ шкул тума тытăнма 1976-77 çулсенчех ĕмĕтленнĕ, анчах та çакă пурнăçа кĕресси нумай çула тăсăлнă. 80-мĕш çулсен вĕçĕнче проект хатĕрлеççĕ, çакăнпа 4 çул иртет, ун хыççăн ăна Министрсен Совечĕн капстроительство пайĕн планне кĕртеççĕ. Никĕсне хурсан та-ха шкул официаллă черете икĕ çул кĕтет. Телее, ТР Аслă Канашĕн депутатне пирĕн округран Р.Х.Мухаметшин Премьер-министра суйлаççĕ, района ертсе пыма хастар ĕçчене Ф.С.Сибагатуллина шанаççĕ. Строительство шăпине вĕсем пулăшнипе татса параççĕ. Çĕнĕ çурта искусствăсен керменĕн шайне çитерниче вара - Талгат Сафаргалеевичăн тÿпи пысăк, çакăнпа кашни килĕшет пулĕ. Объекта хăпартнă вăхăтра та ăна нумай тÿрлетÿсем кĕртме тÿр килнĕ, 547-мĕш ПМК строителĕсем те унпа килĕштерсе ĕçленĕ. Вĕсем пысăк хола уйăрса икĕ класс тума калаçса татăлаççĕ. Стенасем çине сăрă выранне хитре шпалер çыпăçтараççĕ. Музыка инструменчĕсем туянас тесе директор Санкт-Петербург хулинех çитет. Акă телей: инçе командировкăран килсен иккĕмĕш кунне Фарит Хайруллович хăй унăн шухăшне пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе пурлăх енчен пулăшма шантарнă. Çапла майпа 10 пианино, кабинетри 3 рояль, 1 концерт роялĕ, банкеткăсем, сĕтелсем туяннă. Хушма оборудование туяниччен малтан Талгат Сафаргалеевич вĕсене тиркевлĕн хаклать: хăтлă, хитре, çирĕп тата ... йÿнĕ пулччăр! Чылай вăхăт ширанă хыççăн вăл Çыранçи Чаллăра “Файзи” фирмăпа çыхăнать, хатĕр проектсене лайăх суйласа, ĕçлесе çитернĕ хыççăн кирлĕ сĕтел-пукан тума заказ парать.

Çапла йĕркеленнĕ хальхи шкул. Халь директор ĕçĕн творчество енне лайăхлатас тĕллев лартнă, ăна районпа хула пурнăçĕпе çыхăнтарма вăхăт çитнĕ, майсем те пур. Класс тулашĕнчи ĕçе вăйлатмалла, пуянлатмалла. Палăртнă плансем пур ĕнтĕ, çĕнĕ шухăшсем çуралаççĕ: çапла, декабрь уйăхĕнчен абонент тивĕçтерĕвне хута ярĕç, професиллĕ музыкантсемпе, юрăçăсемпе тĕл пулусем планлаççĕ. Кăрмăш микрорайонĕнче ачасен музыка шкулĕн филиалне уçма майсем шыраççĕ. Çак пĕтĕм çĕнĕлĕхре те директор хăй пуçаруçă, çав вăхăтрах вăл районта ирттерекен пĕрлехи культура мероприятийĕсене те активлă хутшăнма ĕлкĕрет.

...Виçĕ çулта чухне Талгат пиччĕшĕн купăсне тытнă, кайран вара пурнăçĕ тăршшĕпех унпа пĕрле баян пулнă. Вăл йăлтах музыкăна, пултарулăха парăннинчен тĕлĕнмелли çук: чунчĕри тулса çĕнĕрен те çĕнĕ юрăсем çуратать, вĕсем 20 яхăн ĕнтĕ, романс та пур. Кашни произведени уншăн хăйне майлă хаклă, вĕсем пурте Т.Бадыгин “почеркĕпе” çыхăннă - лиризм тата чун-чĕре сасси. Хăй вара чи лайăх юрра çырман-ха тет, вăл - малашлăхра.

Ман шутпа, çакă ĕнтĕ вăл музыкантăн тулли пултарулăх тапхăрĕ. 50 çула çывхарса пыраканскерĕн вĕсене пурнăçлама вăйĕ те, шухăшĕсем те çителĕклĕ.

Шăпа ăна лайăх мăшăр парнеленĕ: Зульфия хăй те пултаруллă юрăçă, ăста кил хуçи хĕрарăмĕ. Вăл тытăннă ĕçе вĕçлемесĕр чарăнмасть, ăслă-тăнлă, шанчăклă тус, мăшăр, анне. Ашшĕ-амăшĕн чĕрисене икĕ хĕр ăшăтаççĕ - Айгуль тата Зульфина. Бадыгинсем пурнăçра пĕччен мар - нумай тус-юлташ, ватăлми “Ветеран” хор, вĕренекенĕсем, чи кирли вара - иксĕлми ĕç - çаксем пурте Бадыгинсен малашлăха пыракан ырă йăлисем. Паллах ĕнтĕ, Бадыгинсемшĕн юрăкĕвĕсĕр пурнăç - пурнăç мар.

С.ХАЙРУЛЛИНА.



*Анат Чаллăри мăшăрсем Валентина Александровнапа Александр Федорович Назаровсем хăйсен пурнăçĕн ытларах пайне çурт-йĕр тăвассине халалланă. Çитмĕле çитнĕ пулин те, вĕсем алă усса лармаççĕ. Çапла, çулла выльăх-чĕрлĕх фермисене юсанă çĕре хутшăннă, раствор тунă, урайсене улăштарнă.*

*Назаровсем 5 ача ÿстернĕ. Ывăлĕсем Андрейпе Николай трактористсем пулса ĕçлеççĕ. Аслашшĕпе асламăшĕн 18 мăнук, вĕсене ырă йăлкулăпа кĕтсе илеççĕ, тутлă апатçимĕçпе хăналама тăрăшаççĕ. Назаровсем кил-картиш тулли выльăх-чĕрлĕх усраççĕ, пур çĕрте те йĕркелĕх хуçаланать. Вĕсем ĕççĕр пурăнма хăнăхман.*

*Ўкерчĕкре: Синдряков ячĕпе хисепленекен ассоциаци пенсионерĕсем Валентина Александровнапа Александр Федорович Назаровсем.*

*Н.Азизов сăнÿкерчĕкĕ.*

## Яшсем çара каяççĕ

Яшсене салтака ăсатмалли вăхăт каллех çитрĕ. Акă вĕсем пулас салтаксем: Рустем Давлетшин, Руслан Исмагилов, Айрат Галиуллин, Рустем Абдрахманов тата Ильнур Миндубаев. Вĕсен пурин те часах Тăван çĕршыв умĕнчи сăваплă тивĕçе пурнăçламалла пулать. Çавăнпа та яшсене тĕрĕс-тĕкел киле таврăнма сунас, ашшĕ-амăшĕсемпе тусĕсем патне çырусем çырсах тăччĕр тесе калас килет. Ял çыннисем сире кĕтĕç.

## Хадича кинемей тав тăвать

Вăхăт та, пурнăç та сисĕнмесĕрех иртсе каять. Акă хăй вăхăтĕнче колхозра ывăннине пĕлмесĕр ĕçленĕ Хадича та ватăлма ĕлкĕрнĕ ĕнтĕ. Унăн çывăх çыннисем пулмасан та вăл пĕччен мар, ун патĕнче кÿршисем час-часах пулаççĕ. Вĕсем унăн сывлăхĕпе яланах кăсăкланаççĕ. Хадича кинемейĕн куçĕ начар курма тытăнсан, Гульсина Гареева медсестра ăна районти тĕп больницăна илсе килнĕ те кунта ăна операци тунă. Халь вара Хадича кинемей районти тĕп больницăри куç уйрăмĕн заведующине Мидхат Галеева, ялти медсестрана Гульсина Гареевана тата хăйĕн ырă кăмăллă кÿршисене Зульфа Шагивалеевана, Суфия Гафиятуллинана, Таскира Хаметвалеевана, Савия Хайдарована, Зульфия Давлетшинана, Сара Нургалеевана хаçат урлă тав тума ыйтать. Вăл вĕсене пурне те çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр сунать.

## Яалкорсем çыраççĕ

## Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессинчи çĕнĕ система

Хуçалăхри выльăх-чĕрлĕх пăхакансем акă пĕр уйăх ытла ĕнесене кăкармасăр тытас меслетпе ĕçлеççĕ, çакă вара дояркăсен ĕçне чылай çăмăллатнă. Кунта уйрăм ушкăнсем çук. Сăвакан зала икĕ енчен 8-шар ĕне кĕрет. Кашни ĕне умĕнче валашка, унта фураж хураççĕ. Сĕт тÿрех сивĕтекен çĕре пырать. Сĕт çулăхĕ пысăк, 4,5 процента çитет. Дояркăсем халь бидонсем çăвассинчен, йăтассинчен хăтăлнă. Ĕнесене суса пĕтернĕ хыççăн сăвакан аппаратсене тÿрех вĕри шывпа çăваççĕ. Ку ĕçе Азат Гафиятуллин оператор пурнăçлать. Выльăхсене сăвакан зала Минегаяз Шагивалеев учетчик-лаборант кĕртет. Ĕнесене сăвасси 2,5 сехет хушши пырать. Ферма заведующийĕ Фарит Галиуллин, Равиль Яруллин ветврач, Вагиз Шакуров зоотехник, выльăхсене искусствăлла майпа пĕтĕлентерекен технолог Фарит Мустафин, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен механик Гумер Хайдаров яланах дояркăсемпе пĕрле, вĕсене кирлĕ канашсем параççĕ.

З.ИСМАГИЛОВА,
“Татарстан” ассоциаци дояркки.

# Пĕрле кăна çăмăлрах пулĕ

"Шурă туя" кунĕсене ирттересси Пĕтĕм Раççейри суккăрсен обществин организацийĕн пурнăçĕнче йăлана кĕнĕ ĕнтĕ. Нурлатра кăçал вĕсене кĕркунне, ноябрь уйăхĕнче, ирттерчĕç, кунта хăйне евĕрлĕ уйрăмлăх пур: шăпах çулталăк вĕçĕнче итогсене пĕтĕмлетеççĕ тата çĕнĕ задачăсем палăртаççĕ. "Шурă туя" кунĕсене тĕпе хунă тĕлпулу ВОС организацире пулчĕ, ку хутĕнчи тĕллевсем: патшалăх, хуçалăх органĕсен, общественность тата пресса представителĕсенчен суккăрсен кăткăс ыйтăвĕсене тимлĕх уйăрса пулăшма ыйтасси. Ахаль çынсен те йывăрлăхсем нумайăн çинчен каламалли те çук ĕнтĕ, суккăрсем вара пачах уйрăм, хӳтлĕхсĕр категори шутланаççĕ.

Суккăрсен нушисемпе интересĕсем кулленхисем, хăнăхнисем, вĕсем ытла йывăр та мар. Экономика сăлтавĕсене пула пенсисене вăхăтлă параймаççĕ (пенсисемпе пособисене районта нумай вăхăт хушши вăхăтлă парса пынă), çавăнпа вĕсен пурнăçĕ кунран-кун йывăрланать. Пĕрремĕш ушкăнри инвалид А.Нищенко каланă тăрăх, "чĕрĕ" укçа çук, апат-çимĕç чекĕсемпе пурăнатпăр, ывăл институтра вĕренет - пулăшмалла, майĕ вара çук... Апат-çимĕçшĕн, коммуналлă услугăсемшĕн, телефонпа усă курнăшăн карточкăпа тӳлеме пулать-ха ĕнтĕ, хаçат-журнал вара унпа çырăнаймăн. Куллен кирлĕ таварсен хакĕсем куç умĕнчех ӳсеççĕ, малашне пурнăç лайăхланĕ-ши?

Халăха социаллă хӳтлĕх паракан управлени специалистне М.Хусаинована кăна мар, АТП эксплуатаци начальникне Т.Ибрагимова та нумай ыйту пачĕç. Мĕншĕн автобуссен водителĕсем чарăнура тăракан суккăр çынна лартса кайма хăш-пĕр чухне чарăнмаççĕ (А.Маркин, В.Иванов тата ыттисем те), хуласем хушшинчи рейссемшĕн çăмăллăхсемпе усă курса тӳлесси мĕнле сроксенче вăйра тăрать, контролерсем хивре калаçнине палăртрĕç, суккăрсене сывă çынсемпе танлаштармалла маррине каларĕç: çул аяккинче шурă туя çĕкленĕ çын тăрать - апла пулсан, шофер, çул урлă каçма май пар - пăрлă çулпа утма сыввине те хăрушă. Паллах, çаксем пуриншĕн те паллă "йăла культурин" çитменлĕхĕ пулать. Курманнисене вара çакăнтан çăмăл мар вĕт.

Общество членĕсем ГИБДД начальникне Х.В.Аюпова ытларах ыйту пачĕç. Мероприятие хутшăннисем влаçрисене ырă сунса калаçнине палăртмалла: лару-тăру хĕрхенӳллĕ марччĕ, хăш-пĕр ыйтусене татса парасшăнччĕ, вĕсем вара уйрăм çыннăн мар, пурин те. Тĕслĕхрен, Заводская урамĕнчи тата НГДУ администраци çурчĕ патĕнчи хĕреслĕ çулсем урлă каçнă чухне шкула çӳрекен ачасен пурнăçне мĕнле хăрушсăрлатмалла? Линейная урамĕнче тротуар питĕ кирлĕ, хулара çаврăнăç çулпа çӳрессипе çыхăннă ыйтăва хăçан татса параççĕ? Темиçе уйăх ĕнтĕ хулара светофорсем ĕçлемеççĕ, çакă вара çуран çӳрекенсемшĕн хăрушă, япала сутакан пасар патĕнче автомобильсем лартмалли вырăн тăвас тĕлĕшпе мерăсем йышăнĕç-и? Ку ыйтусем çинче ГИБДД начальникĕ чарăнса тăчĕ. Çак калаçăва куçĕсем курман инвалидсем Г.Идрисова, В.Осипова тата ыттисем те активлă хутшăнчĕç. Ку тĕлпулăва çаплах администраци представителĕ - общественноçпа ĕçлекен специалист Р.Сунгатуллина хутшăнчĕ. Хулапа район администрацийĕ ВОС организаци ĕçĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине, суккăрсен ыйтăвĕсене ăнланать, пулăшать. Çак пĕтĕмлетӳ ВОС организацийĕн председателĕ З.Богданова калаçăвĕнче те палăрчĕ. Суккăрсен çурчĕсене юсама тата газ кĕртме пулăшаççĕ, кирлĕ пулсан транспорт уйăрса параççĕ, хăш-пĕр мероприятисене финанслаççĕ. Акă çырăнтару кампанийĕнче те "Наша жизнь" журнал çырăнса илме район бюджетĕнчен укçа-тенкĕ уйăрса панă. Çак журнал суккăр çынна питĕ кирлĕ: издани çынсен пурнăç опычĕпе паллаштарать, малашлăха шанма пулăшать, кăмăлне çĕклет.

"Шурă туя" пĕтĕмĕшле çакна кăтартрĕ: суккăрсен ыйтăвĕсем вырăнти влаçа, пирĕн общественноçа яланах пăшăрхантараççĕ. Вĕсемшĕн çакă яланах пĕлтерĕшлĕ пулнă. Çак кризислă вăхăтра уйрăмах.

Т.НАЗАРОВА.



Н.Азизов фотоэтюдĕ.

## Шахмат уявĕ



Хулара тата районта иртекен массăлла спорт ăмăртăвĕсен программинче шахмат та пысăк вырăн йышăнать.

Юлашки çулсенче шахматла вылякансен шучĕ чылай ӳсрĕ. Ăмăртăва хутшăннисен хушшинче рабочисене, служащисене, интеллегенци представителĕсене курма пулать. 1998 çулхи тĕп событи вăл - хулара шахматла уйрăмшарăн тата командăпа мала тухассишĕн ăмăрту уçни. Çĕнтерӳшĕн 25 спортсмен ăмăртмалла.

1998 çулхи ноябрĕн 21-мĕшĕ. Шăматкун. Ачасемпе çамрăксен клубĕ. Ирхине 10 сехет. Шахматла вылякан пӳлĕм, унта икĕ ретпе шахмат сĕтелĕсем лартнă, ăмăртăва хутшăнакансем пуçтарăнаççĕ: Р.М.Минибаев, С.М. Амелин, И.В.Прокопьев, А.С.Насыбуллин тата шахмат баталийĕсен ветеранĕ В.А.Васяев.

Пурин те кăмăлĕ лайăх. Ăмăртăва хутшăнакансен шучĕ ӳснĕçемĕн ӳсет. Хăшĕсем тӳрех сĕтелсем хушшине вырнаçрĕç. Турнира уçни уяври пек ларутăрура иртрĕ. Кайран ăмăртăва хутшăннисем хăйсен юлташне, хăйĕн пурнăçĕн юлашки кунĕчченех "Сельхозтехника" акционер обществинче ĕçленĕ В.В.Чеплакова асăнса пĕр минут чĕнмесĕр тăчĕç. Шахмат турнирне тивекен мĕнпур ыйтусене татса панă хыççăн, ăмăрту пуçланчĕ.

Шахмат вăййипе кăсăкланакансене вылякан кунсене пĕлтеретĕп: юнкун - 16.00 сехетре, шăматкунпа вырсарникун - 10.00 сехетре.

Эпĕ ăмăртăвăн тĕп судйи пулнă май, вăйăсене хутшăнакансене пурне те ăнăçлăхсем сунатăп.

Ырă сехет тĕлне пултăр!

А.КОСТИН.

## Варени мĕншĕн пăсăлать?

**Кăçал та варени нумай хатĕрлесе хăвартăмăр. Анчах хăш-пĕр банкăсенче вăл пăсăлнине асăрхарăмăр. Мĕнрен килет-ха çакă?**

**М.Васильева.**

Варени пахалăхĕ ăна мĕнлерех хатĕрленинчен килет. Тĕрĕс пĕçернĕ варени сиропĕ ытла çăра е ытла шĕвĕ пулмалла мар. Тĕксĕм хăмăртарах тĕслĕ варени ăна ытлашши нумай вĕретнине çирĕплетет. Енчен те варенире сироп нумай тата вăл шĕвĕ пулсан, ăна ытла хăвăрт пĕçернĕ, çырласене сахăр çителĕклĕ сăрхăнайман. Технологие çирĕп пăхăнса вĕретмесен, савăт тасах пулмасан, тĕрĕс мар упрасан варени кăвакарать, йӳçме пуçлать е сахăрланса ларать. Варени кăвакарни е йӳçни унта сахăр çителĕксĕр хывманни, ăна нӳрĕ банкăсене тултарни çинчен калать. Кун пек варение çĕнетме пулать: кăмпăсланнă сие майĕпен пухса илмелле, çырлисене сиропран уйăрмалла, сиропа сахăр хушса тепĕр хут вĕретмелле, унтан çырласене хушса тата кăшт вăхăт вĕретсе илмелле. Хыççăн типĕ, таса банкăсене тултарса лартмалла.

Йӳçĕклĕхĕ пĕчĕк çырласенчен хатĕрленĕ варени нумай чух сахăрланса ларать. Çавăн пек пуласран варение пĕçерсе çитернĕ тĕле кашни килограмм çырла пуçне 1-2 грамм лимон кислоти хушмалла. Енчен те варени сахăрланса ларчĕ пулсан, унта шыв хушса /1-1,5 килограмм варени çине 1/8 стакан шыв/ вĕреме кĕртмелле. Хыççăн таса банкăсене тултарса лартмалла.

## Пĕлтерӳсем

### *Сутатпăр:*

***"Москвич-412", хакĕ 5 пин тенкĕ. Салтакъелĕнчи Евдокимовсенчен ыйтса пĕлмелле.***

* * *

***Кăрмăш микрорайонĕнче пĕр пӳлĕмлĕ хваттер. Телефон: 5-17-47.***

* * *

***1991 çулта туса кăларнă ВАЗ-2107. Телефон: 2-12-75.***

* * *

***НГДУ ЖКХ çывăхĕнче лайăх гараж. Телефон: 2-29-11.***

* * *

***Туй кĕпи. Телефон: 5-26-87.***

* * *

***Хуралтăвĕнчи заводра туса кăларнă кирпĕч, хаклă мар. Леçсе пама пултаратпăр. Телефон: 2-28-65.***

* * *

***"Нефтяник" клуб çывăхĕнче 2 пӳлĕмлĕ хваттер. Циолковский урамĕнчи 31-мĕш çуртри 1-мĕш хваттерте ыйтса пĕлмелле.***

### *Тĕрли:*

***Икĕ пӳлĕмлĕ хваттер сутăн илетĕп. Телефон: 5-15-16.***

* * *

***Икĕ пӳлĕмлĕ хваттере пĕр пӳлĕмлипе хушса тӳлесе улăштаратпăр. Тĕплĕ юсанă ВАЗ-2101 тата тасатакан кивĕ сооруженисем çывăхĕнчи гаража сутатпăр. Телефон: 5-36-74.***

* * *

***"Надежда" патшалăх предприятийĕ фотоуслугăсем сĕнет: 20 минут хушшинче документсем валли сăнӳкерчĕк хатĕрлет. "Кодакпа" тĕрлĕ тĕслĕ сăнӳкерчĕк туса пичетлет, хаксем йӳнĕ. Адрес: Школьная урамĕ, Йăла çурчĕ, пĕрремĕш хут.***

**Тискер кайăксен циркĕ ачасене пурне те Дуровăн тĕлĕнтермĕш тĕнчине чĕнет. Программăра вĕрентнĕ чĕрчунсем - упа, крокодилсем, варансем тата ытти те. Çаплах сире хаваслă клоунсем тата фокусник-иллюзионистсем кĕтеççĕ. Цирк декабрĕн 3-мĕшĕнче 10.00, 14.00 сехетсенче районти культура çуртĕнче пулать. Билет хакĕ 10 тенкĕ.**


**М.Б.Багрянцев врач çынсене эрех ĕçнинчен тата табак туртнинчен пĕр сеанспа сиплет.**

**Пирĕн патра кăна!**

**Сеанса пĕтĕмпех анонимлă ирттеретпĕр. Сипленĕ чухне тăванĕсем пулма пултараççĕ. Справка паратпăр. Консультаци, калаçу, каярахри сăнавсем тата кодировани хыççăнхи пулăшу - тӳлевсĕр!**

**Сипленĕ кунсенче, эрнекунсенче, декабрĕн 11, 25-мĕшĕсенче районти культура çуртĕнче 12 сехетре çырăнтару тата калаçу ирттеретпĕр. Лицензи МЗ РФ N00164-30, 1995 çулхи январĕн 16-мĕшĕнче панă.**



**Редактор Т.И.БУРАЙКИНА.**

**Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ**

**Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тутарла, вырăсла тата чăвашла тухать.**

**ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.**

**ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.**

**Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.**

**Регистрациленĕ номерĕ 34.**

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 893. 4649